# ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
# САККУНЕ

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛĂХ КАНАШЁН ДЕПУТАЧЁСЕН СУЙЛАВЕ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕнче*
*йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ çинчен" 2006 çулхи пуш уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 9 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2006, 67, 69 №-сем; 2007, 73 №; 2009, 80, 82 №-сем; 2010, 85, 87 №-сем; 2011, 89–91 №-сем; 2012, 92 (I том), 95 №-сем; "Республика" хаçат, 2012, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 10 №; 2014, 9 №; 2015, 5 №; 2016, 4, 6 №-сем; 2017, 3 №; "Республика" хаçат, 2018, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 31-мĕшĕ; 2019, пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2021, çу уйăхĕн 26-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2022, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2023, ака уйăхĕн 5-мĕшĕ, çу уйăхĕн 31-мĕшĕ, чӳк уйăхĕн 8-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 27-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 5 статьяна çакăн пек çырса $2^3$-мĕш пай хушса хурас:

"$2^3$. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавне ирттернĕ чухне кандидат кандидата, кандидатсен списокне регистрацилеме кирлĕ документсене тăратнă самант тĕлне ют çĕршыв агенчĕ статусне пăрахăçлама тивĕçлĕ.";

2) 28 статьян $8^1$-мĕш пайне ", çавăн пекех кандидат çак статьян 4-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн тăратмалли сведенисен шутĕнче Раççей Федерацийĕн территорийĕн тулашĕнче вырнаçнă ют çĕршывсен банкĕсенче счетсем (вкладсем), алăри укçа-тенкĕ тата хаклă япаласем тата (е) ют çĕршывсен финанс инструменчĕсем пурри çинчен сведенисем кăтартнă е тата кăтартнă сведенисене çак статьян $8^2$-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн ирттернĕ тĕрĕслев результачĕсем тăрăх тупса палăртнă пулсан" сăмахсем хушса хурас;

3) 29 статьян 16-мĕш пайĕнче "асăннă списока патшалăхăн кулленхи пичет кăларăмĕсенче пичетлесе кăлараççĕ," сăмахсене кăларса пăрахас, "ăна вырнаçтараççĕ" сăмахсене "асăннă списока вырнаçтараççĕ" сăмахсемпе улăштарас, "асăннă списока ярса параççĕ" сăмахсене "ăна ярса параççĕ" сăмахсемпе улăштарас;

4) 30 статьяна çакăн пек çырса $2^1$-мĕш пай хушса хурас:

"$2^1$. Ют çĕршыв агенчĕсен реестрне кĕртнĕ çынсем, экстремистла е террорла организацисен ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă çынсем çинчен калакан сведенисен пĕрлехи реестрне сведенисем кĕртнĕ çынсем суйлав пĕрлешĕвĕсен полномочиллĕ представителĕсем пулма пултараймаççĕ.";

5) 31 статьяра:

а) $2^3$-мĕш пая çакăн пек çырса тăваттăмĕш çĕнĕ предложени хушса хурас: "Уйрăм кандидат тĕлĕшпе Чăваш Республикин Суйлав комиссине тăратнă документсене çырса хатĕрленĕ чухне йăнăшсем (пичетленнĕ йăнăшсем) туни пĕр мандатлă тивĕçлĕ суйлав округĕнче тăратнă гражданина шанчăклăн палăртма май паман чухне Чăваш Республикин Суйлав комиссийĕ тивĕçлĕ кандидата пĕр мандатлă суйлав округĕсем тăрăх тăратнă кандидатсен списокĕнчен ăна çирĕплетиччен кăлармалли сăлтав шутланать.";

ă) 8-мĕш пайăн иккĕмĕш абзацне ", çавăн пекех кандидат çак статьян 3-мĕш пайĕн 2-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн тăратмалли сведенисен шутĕнче Раççей Федерацийĕн территорийĕн тулашĕнче вырнаçнă ют çĕршывсен банкĕсенче счетсем (вкладсем), алăри укçа-тенкĕ тата хаклă япаласем тата (е) ют çĕршывсен финанс инструменчĕсем пурри çинчен сведенисем кăтартнă е тата кăтартнă сведенисене çак пайпа килĕшӳллĕн ирттернĕ тĕрĕслев результачĕсем тăрăх тупса палăртнă пулсан" сăмахсем хушса хурас;

б) $13^2$-мĕш пая ", çавăн пекех кандидат çак статьян 11-мĕш пайĕн 1-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн тăратмалли сведенисен шутĕнче Раççей Федерацийĕн территорийĕн тулашĕнче вырнаçнă ют çĕршывсен банкĕсенче счет-

сем (вкладсем), алăри укçа-тенкĕ тата хаклă япаласем тата (е) ют çĕршывсен финанс инструменчĕсем пурри çинчен сведенисем кăтартнă е тата кăтартнă сведенисене çак статьян $13^3$-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн ирттернĕ тĕрĕслев результачĕсем тăрăх тупса палăртнă пулсан" сăмахсем хушса хурас;

6) 35 статьяра:

а) çакăн пек çырса $1^3$-мĕш пай хушса хурас:

"$1^3$. Енчен те тивĕçлĕ суйлав округĕ тăрăх суйланма килĕшни çинчен çырнă заявленире кандидат ют çĕршыв агенчĕ пулни çинчен калакан сведенисене кăтартнă пулсан, кандидат Чăваш Республикин Суйлав комиссине кандидата регистрацилеме кирлĕ ытти документсемпе пĕрле кандидата ют çĕршыв агенчĕсен реестрĕнчен кăларни çинчен федерацин ĕç тăвакан влаçĕн коммерциллĕ мар организацисене регистрацилес сферăра патшалăх политикине туса хатĕрлес тата пурнăçлас тата ăна нормативлă право тĕлĕшĕнчен йĕркелесе пырас енĕпе ĕç-хĕл пурнăçлакан органĕн пĕлтернине е тата судăн тивĕçлĕ йышăнăвне тăратать.";

ă) 10-мĕш пайра:

çакăн пек çырса $1^2$-мĕш пункт хушса хурас:

"$1^2$) кандидат çак Саккунăн 5 статйин $2^3$-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă требованисене пурнăçламанни;";

9-мĕш пункта "саккунпа палăртнă" сăмахсем хыççăн "тивĕçлĕ" сăмах хушса хурас;

б) 11-мĕш пайăн 7-мĕш пунктне "саккунпа палăртнă" сăмахсем хыççăн "тивĕçлĕ" сăмах хушса хурас;

в) 12-мĕш пая çакăн пек çырса $3^2$-мĕш пункт хушса хурас:

"$3^2$) кандидат çак Саккунăн 5 статйин $2^3$-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă требованисене пурнăçламанни;";

7) 39 статьян 2-мĕш пайĕнче пĕрремĕш предложение ", ют çĕршыв агенчĕсен реестрне кĕртнĕ çынсем, экстремистла е террорла организацисен ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă çынсем çинчен калакан сведенисен пĕрлехи реестрне сведенисем кĕртнĕ çынсем" сăмахсем хушса хурас;

8) 42 статьян 3-мĕш пайĕнче ", çавăн пекех сасăлав кунĕнче" сăмахсене "тата сасăлав кунĕнче (сасăлавăн юлашки кунĕнче) сасăлав вĕçленнĕ самантчен" сăмахсемпе улăштарас;

9) 47 статьян 7-мĕш пайĕнче "ют çĕршыв агенчĕ шутланакан регистрациленĕ кандидат е" сăмахсене кăларса пăрахас, "ют çĕршыв агенчĕ е канди-

дат пулни" сăмахсене "кандидат пулни" сăмахсемпе улăштарас, "ют çĕршыв агенчĕ шутланакан е кандидат" сăмахсене "кандидат шутланакан" сăмахсемпе улăштарас;

10) 48 статьян 15-мĕш пайĕнче "ют çĕршыв агенчĕ шутланакан кандидат" сăмахсене тата "ют çĕршыв агенчĕ е" сăмахсене кăларса пăрахас;

11) 53 статьяра:

а) 5-мĕш пайăн 14-мĕш пунктĕнче "çавăн пекех" сăмахсене кăларса пăрахас, ", экстремистла е террорла организацисен ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă çынсем çинчен калакан сведенисен пĕрлехи реестрне сведенисем кĕртнĕ çынсен" сăмахсем хушса хурас;

ă) 9-мĕш пая çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

"Кандидатăн суйлав фончĕ тăкаклакан (кандидата регистраци тăвиччен тăкаклама юракан) укçа-тенкĕн чи пысăк виçи кандидатăн суйлав фончĕ тăкаклакан укçа-тенкĕн çак пайпа палăртнă чи пысăк виçин 30 проценчĕпе танлашать.";

б) 10-мĕш пая çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

"Суйлав пĕрлешĕвĕн суйлав фончĕ тăкаклакан (кандидатсен списокне регистраци тăвиччен тăкаклама юракан) укçа-тенкĕн чи пысăк виçи суйлав пĕрлешĕвĕн суйлав фончĕ тăкаклакан укçа-тенкĕн çак пайпа палăртнă чи пысăк виçин 30 проценчĕпе танлашать.";

12) 57 статьян 5-мĕш пайăн "д" пунктне ", тата кандидатсен, суйлав пĕрлешĕвĕсен финанс отчечĕсене тăратнин тата тĕрĕсленин результачĕсем тăрăх Чăваш Республикин Суйлав комиссине правăна сыхлакан тата ытти органсене кирлĕ мерăсем йышăнма тата Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн айăплă çынсене явап тыттарма тивĕçлĕ материалсене ярса парасси çинчен сĕнӳсем тăратать" сăмахсем хушса хурас;

13) 60 статьяра:

а) $8^1$-мĕш пайра "ют çĕршыв агенчĕ е" сăмахсене кăларса пăрахас;

ă) 21-мĕш пая çакăн пек çырса хурас:

"21. Сасăлав кунĕнче (сасăлавăн юлашки кунĕнче) сасăлав вăхăчĕ вĕçленнĕ хыççăн суйлав комиссийĕсенче усă курмасăр юлнă суйлав бюллетенĕсене çак Саккунăн 64 статйин 3-мĕш пайĕн требованийĕсемпе килĕшӳллĕн шутласа тухаççĕ тата пăрахăçлаççĕ. Мĕнпур суйлав комиссийĕсенче, участкри суйлав комиссийĕсемсĕр пуçне, усă курман суйлав бюллетенĕсене пăрахăçланă чухне пăрахăçланă суйлав бюллетенĕсен хисепне кăтартса акт çы-

раччĕ. Суйлав бюллетенĕсене пăрахăçланă çĕре Федераци саккунĕн 30 статйин 3-мĕш пунктĕнче кăтартнă çынсем хутшăнма пултараччĕ. Çав суйлав бюллетенĕсене суйлав комиссийĕн секретарĕ суйлав комиссийĕн ытти документĕсемпе пĕрле упрать.";

14) 64 статьян 3-мĕш пайĕнче пĕрремĕш предложение çакăн пек çырса хурас: "Сасăлав вăхăчĕ вĕçленнĕ хыççăн участокри суйлав комиссийĕн татса паракан сасă правиллĕ членĕсем сăнавçăсем, Федераци саккунĕн 30 статйин 3-мĕш пунктĕнче кăтартнă ытти çынсем умĕнче усă курман суйлав бюллетенĕсене шутласа тухаччĕ те суйлавçă паллă лартмалли тăваткала пăсмасăр Раççей Федерацийĕн Тĕп суйлав комиссийĕ Федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн палăртнă меслетсемпе çавнашкал суйлав бюллетенĕсене малалла усă курма юрăхсăр пултăр тесе пăсса пăрахăçлаччĕ, ун хыççăн пăрахăçа кăларнă усă курман суйлав бюллетенĕсен, çавăн пекех сасăлав ирттернĕ чухне суйлавçăсем пăснă суйлав бюллетенĕсен хисепне пурте илтмелле пĕлтереччĕ тата сасăлав итогĕсен протоколĕн тата сасăлав пӳлĕмĕнче вырнаçнă унăн пысăклатнă формин 5-мĕш йĕркине çырса хураччĕ.".

**2 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 19-мĕшĕ
46 №